# Ӳнерпе кӗвӗ пӗрлешӗвӗ

Кӑрлач уйӑхӗн 13-мӗшӗнче Чӑваш наци библиотекинче «Кӗмӗл ӗмӗр» галерейӑра РФ Художниксен союзӗн членӗн ЧР тава тивӗçлӗ художникӗн, И.Я.Яковлев ячӗллӗ Чӑваш  патшалӑх педагогика университечӗн ӳнерпе графика факультечӗн деканӗн Анатолий Даниловӑн куравӗ уçӑлнӑ.

30 çул пултарулӑх анинче тӑрӑшаканскер виçӗ пин ытла картина ӳкернӗ, 40-е яхӑн выставка йӗркеленӗ. Анатолий Васильевич Пӗтӗм тӗнчери, Раççейри, регионсен хушшинчи, республикӑри куравсене час-часах хутшӑнать.

Кураври пейзажсемпе натюрмортсенче художник çут çанталӑка юратни, вӑл ӳсен-тӑрана çеç мар, кашни япалана сӑнама, вӗсенче хӑйне евӗрлӗх тупма пӗлни, чӗрӗлӗх курма пултарни палӑрать.

Мероприятире искусствоведени докторӗ, РФ искусствисен тава тивӗçлӗ деятелӗ Алексей Трофимов Анатолий Данилов Чӑваш Ен ӳнер искусствин аталанӑвӗнче пысӑк вырӑн йышӑннине палӑртнӑ. Раççей тава тивӗçлӗ, ЧР халӑх художникӗ Праски Витти ӳнерçӗ пултарулӑхне наци культура пуянлӑхӗ вырӑнне хурса хакланӑ.

«Унӑн ӗçӗсем - кӗвӗпе ӳнер пӗрлешӗвӗ», - тенӗ РФ тата ЧР искусствӑсен тава тивӗçлӗ деятелӗ Михаил Кондратьев профессор.

*Кротова, Т. Ӳнерпе кӗвӗ пӗрлешӗвӗ : [Чӑваш Республикин Наци библиотекинче «Кӗмӗл ӗмӗр» галерейӑра Чӑваш Республикин тава тивӗçлӗ художникӗн, И. Я. Яковлев ячӗллӗ Чӑваш патшалӑх педагогика университечӗн ӳнерпе графика факультечӗн деканӗн Анатолий Даниловӑн куравӗ уçӑлни çинчен] / Т. Кротова // Хыпар. – 2011. – 19 кӑрлач. – С. 1.*